Ноябрĕн 1-мĕшĕ – Суд приставĕсен кунĕ

# Саккуна та хӳтĕлес пулать

Суд приставĕсен институтне йĕркелени вăл, пĕтĕмĕшле илсен, 1917 çулччен пулнă Раççей юридицийĕн тĕп шухăшĕ патне таврăнниех пулса тăрать. 1270 çултах суд йышăнăвĕсене пурнăçлакан приставсем пирки пĕрремĕш хут асăнни пур.



18-мĕш ĕмĕр тĕлне суд йышăнăвĕсене ирĕксĕрлесе пурнăçлаттаракан пĕртен-пĕр орган вăл пĕтĕмĕшле полици пулса тăнă. Меллех пулман. Суд йышăнăвĕсене пурнăçлаттарассишĕн ответлă пулса тăракан ятарлă çынсем кирлĕ пулнă. Ку тĕлĕшпе суд приставĕсем ĕçлеме тытăннă. Раççей империйĕн законодательствипе килĕшӳллĕн унта ĕçлеме пултаракансен квалификаци требованийĕсене те палăртнă.

1917 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи Судсем пирки калакан 1-мĕш номерлĕ декретпа суд приставĕсен тытăмне пĕтернĕ. Вырăнти судсемпе суд органĕсенчи йĕркелĕхе малтанах Хĕрлĕ гварди, кайрантарах вырăнти милици тивĕçтернĕ, вĕсемех суд приговорĕсене пурнăçланă. Судьясен ĕç сахал пулман пирки ведомствăлла тĕрĕслев те кирлĕ пек пулса пырайман.

Тепĕр 80 çул иртсен историллĕ тĕрĕслĕх çĕнтерчĕ темелле. 1997 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнчен тытăнса «Суд приставĕсем çинчен» тата «Исполнительнăй производство çинчен» Федераллă саккунсем вăя кĕчĕç. Вĕсем суд приставĕсен институтне йĕркелерĕç, ăна ĕç тăвакан влаç органĕсен системинче хăй тĕллĕнлĕхпе тата никама пăхăнманлăхпа тивĕçтерчĕç.

«Суд приставĕсем çинчен» Федераллă саккун вăя кĕнĕ май Чăваш Енре те, пĕтĕм çĕршыври пекех, çĕнĕ службăн подразделенийĕсене йĕркелес ĕç тытăнчĕ. 1998 çулхи январĕн 5-мĕшĕнченпе вăл Раççей Юстици министерствин структура подразделенийĕн территори органĕ пулса тăчĕ. 2005 çулта вара Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Республики тăрăх суд приставĕсен службинчен суд приставĕсен Чăваш Республики тăрăх федераллă службин управленине туса хучĕç. Çапла вара вăл хăй тĕллĕн юридици органĕ пулса тăчĕ.

Суд приставĕсен службин суд тĕрĕслĕхне тивĕçтерессинчи, гражданcемпе патшалăхăн прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлессинчи пĕлтерĕшĕ çуллен ытларах та ытларах. Пирĕн тĕп задача – суд йышăнăвĕсене, ытти полномочиллĕ органсен акчĕсене ирĕксĕрлесе пурнăçлаттарасси. Иккĕмĕшĕнчен, судсенче кирлĕ йĕркене тивĕçтеретпĕр. Кунпа пĕрлех пирĕн службăна дознани функцийĕсене те шанса панă. Çапла майпа 7 статьяпа уголовнăй ĕçсем пуçарма, 13 административлă статьяпа штрафсем пама пултаратпăр.

Службăна ахальтен мар ĕнтĕ «суд тĕрĕслĕхĕн аллипе» танлаштараççĕ. 12 çул хушшинче пирĕн структурăра сахал мар улшăнусем пулса иртрĕç. Республикăра хальхи вăхăтра суд приставĕсен шутĕнче 700 çын ытла. Районти пайра вара пĕтĕмпе те 16 сотрудник кăна. Вĕсенчен ОУПДС енĕпе приставсем 5-ĕн тата пристав-исполнительсем 8-ăн.

Пирĕн пайри суд приставĕсен тĕп принципĕ çавă. Хальхи демократи çĕршывĕнче саккуна, обязательствăсене пăхăнманни пулма пултараймасть. Суд саккунлă йышăну туни кăна çителĕксĕр, çак йышăну пурнăçа кĕни пĕлтерĕшлĕ. Çавăн чухне кăна граждансем суд тĕрĕслĕхне шанма пултараççĕ. Çавăнпа та суд йышăнăвĕсемпе полномочиллĕ органсен тĕрлĕрен акчĕсене ирĕксĕрлесе пурнăçлаттарма тивет. Кусем вĕсем тĕрлĕ категорири парăмсене шыраса илесси, предприятисемпе организацисен ĕçне-хĕлне чарса лартасси, пурăнмалли çуртран кăларса ярасси е вырнаçтарасси, ĕçе каялла вырнаçтарасси т. ыт. те.

Халĕ хăш-пĕр цифрăсене кăна асăнса хăварни вырăнлă пулĕ. Кăçалхи 9 уйăхра пирĕн пайра ирĕксĕрлесе пурнăçлаттармалли 15633 исполнительнăй производство пĕтĕмпе 84093645 тенкĕлĕх пулнă. Çав тапхăртах 10402 исполнительнăй производствăна 30975690 тенкĕлĕх вĕçленĕ. Пурлăха конфискацилессипе, алиментсем, ĕç укçи парăмĕсем, суд постановленийĕпе палăртнă административлă штрафсене шыраса илессипе, кредит организацийĕсем умĕнчи парăмсене татассипе тата ытти тĕрлĕ ыйтупа çыхăннă ĕçсене вĕçне çитерессишĕн тимлеççĕ пирĕн сотрудниксем. Кунсăр пуçне суд приставĕсем-исполнительсем тăрăшнипе налуксемпе тӳлевсем енĕпе бюджета 5668454 тенкĕ куçарнă. Вăл шутран налуксемпе тӳлевсем шыраса илессипе судсен акчĕсемпе килĕшӳллĕн – 321972 тенкĕ.

Май килнипе усă курса вара суд приставĕсене, çак çăмăл мар ĕçпе çыхăннисене хăйсен професси уявĕпе – Суд приставĕсен кунĕ ячĕпе чĕререн тата ăшшăн саламлатăп, малашне те ăнăçуллă, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме ырлăх-сывлăх сунатăп.

**Е. ИВАНОВА,**
**суд приставĕсен районти пайĕн пуçлăхĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: суд приставĕсен районти пайĕн ĕçченĕсен ушкăнĕ.**
**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Юбилей

# Пархатарлă ĕçре тупнă телей

Сăмахăм Николай Борисович Борисов пирки. Чылайăшĕ Муркаш тăрăхĕнче ăна аван пĕлет: хăйĕн тантăшĕсем те, аслăраххисем е кĕçĕнреххисем те. Муркаш хушшинче тĕл пулсан вара нихăçан та сывлăх сунмасăр, сăмах хушмасăр иртмест. Ĕç ветеранĕ 70 çул тултарчĕ çак кунсенче.

Турă пӳрнипе-ши, Николай 1939 çулта комсомол çуралнă кун – октябрĕн 29-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Ухман ялĕнче çуралнă май пурнăç шăпи те ăна ытларах



комсомол ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнтарнă. Ялти шкулта 7 класс, Канашра вăтам шкулта 9 класс вĕренсе пĕтерсен 1960 çулччен Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ. Ĕç биографине республикăри «Сортсемовощ» кантурĕнче пуçăннă, Красноармейски районĕнче агрономра вăй хунă.

Кайран вара комсомол ĕçне кӳлĕннĕ. 1961–1963 çулсенче ВЛКСМ райкомĕн инструкторĕнче, ВЛКСМ Обкомĕн инструкторĕнче, ВЛКСМ райкомĕн 2-мĕш секретарĕнче тăрăшнă.

Хыççăн унăн пĕтĕм пурнăçĕ Муркаш районĕпе çыхăннă темелле. Муркаш районне иккĕмĕш хут йĕркеленĕ хыççăн пултаруллă çамрăка ВЛКСМ Муркаш райкомне ертсе пыма сĕннĕ. Килĕшнĕ. Çапла вара вăл 1964 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче 1-мĕш секретарьте ĕçлеме тытăннă. Унăн пурнăç çулĕ анлă та нумай енлĕ темелле. Хыççăнхи çулсенче вăл куçăмлă майпа Горький хулинчи аслă парти шкулĕнче те вĕреннĕ, КПСС райкомĕн инструкторĕнче те, райкомăн пропаганда пайĕн пуçлăхĕн çумĕнче те, йĕркелӳ пайĕн пуçлăхĕнче те, КПСС райкомĕн 2-мĕш секретарĕнче те, райĕçтăвком председателĕн çумĕнче те, райĕçтăвком ĕçĕсен управляющийĕнче те, ял хуçалăх управленийĕн производство пайĕн пуçлăхĕнче те тимленĕ. Яппăххипе мар, ырă енпе кăна палăрса тăнă. КПСС райкомĕн бюровĕн ларăвĕнче комсомол райкомĕн ĕçне тишкернĕ чухне хăйне Социализмла Ĕç Геройĕ, «Знамя труда» колхоз председателĕ Е.А. Андреев: «Маттур, ĕçлеме пултарать»,– тесе çурăмĕнчен лăпканине халĕ те кулăпа аса илет Николай Борисович. Пенсие вара вăл 2001 çулта тухнă. Унччен Муркашри сĕтçу завочĕн директорĕн çумĕ пулнă.

Тĕрлĕ вырăнта ĕçлеме тӳр килнĕ пулин те, уйрăмах комсомол çулĕсене хавхаланса аса илет вăл. Пултаруллă яшсемпе хĕрсене комсомола илессипе, ответлă ĕçсене комсомолецсене явăçтарассипе нумай тăрăшнă. Хуçалăхсенче кроликсем, чăх-чĕп çитĕнтерессипе, кукуруза акса çитĕнтерессипе яшсемпе хĕрсем ун чухне çине тăнă. Вырăнсенче комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене, фермăсен коллективĕсене йĕркеленĕ. Тухăçлă çĕр улми туса илнĕшĕн 1964 çулта ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне çĕнсе илни те пулнă.

Мăшăрĕпе Валентина Ефимовнапа 3 ача пăхса ӳстернĕ. Вĕсен хăйсен çемйисем, хăйсен ачисем. Юбиляра чунчĕререн саламласа вĕсем вăрăм ĕмĕр пурăнма ырлăх-сывлăх сунаççĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: 1964 çул. Н.Б. Борисов – ВЛКСМ Муркаш райкомĕн 1-мĕш секретарĕ.**

Ял çыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерсе

# Çынсемшĕн меллĕ пултăр теççĕ

Москакасси ялĕнчи Зеленая урамри 8-мĕш çуртра çак кунсенче савăнăçлă лару-тăрура «Каравай» апат-çимĕç магазинĕ уçăлчĕ. Кăнтăр иртсен магазин умне халăх чылай пухăнчĕ. Чăваш эстрада çăлтăрĕ Катя Петрова Светлана Валерьевнапа Андрей Аркадьевич Тридворновсене çакăн пек хăтлă та илемлĕ магазин уçнă ятпа ăшшăн тав туса хаваслă юрăпа пуçларĕ уява. Юрă хыççăн юрă шăрантарчĕç эстрада çăлтăрĕсем Алина Федорова тата Любовь Гордеева.

Çанталăкĕ ăшах тăмарĕ пулин те, çынсем саланма васкамарĕç. Концерт вăхăтĕнчех пухăннисене магазинта ĕçлекенсем тутлă кăлпасси-сырпа сăйларĕç. Пылак шывпа торт вара пурин кăмăлне те кайрĕ.

Сехет çурăна яхăн пычĕ концерт. Ун хыççăн вара чи кĕтнĕ самант – лотерея вылявĕ пуçланчĕ. Мĕн кăна выляттармарĕç пулĕ кунта: апат-çимĕçрен пуçласа хуçалăхра усă курмалли савăтсапа таранах. Чейник те, утюг та, чей ĕçмелли савăтсем те, шыв тасатмалли фильтр та...



Чи хакли вара – микроволновка. Çак хаклă парнене Мăрсакасси ялĕнче пурăнакан Ольга Жирнова тивĕçрĕ. Юлашкинчен артистсем пурне те тепĕр хут саламласа юрăсем шăрантарчĕç.

Чăнах та, «Каравай» магазин уçăлни çакăнта пурăнакансемшĕн питĕ меллĕ. Кунта халĕ 3 çамрăк сутуçă ĕçлет: Наташа, Оксана тата Светлана. Кунти тирпей-илеме вара Ирина тивĕçтерет. Ял çыннисем кунти коллектива ăнăçу сунса телейлĕ çул сĕнчĕç.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Культура çурчĕн директорĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: «Каравайра» ăшшăн кĕтсе илчĕç тавар туянакансене.**

Вулакан пултарулăхĕ

## ПЫЛ ЙӲÇЕЛЧĔ

Пылĕ тутлă питĕ-питĕ!
Вăранать чĕре вăй-халĕ.
Йăпанатăп, иленетĕп –
Пыл çисе вăй-хал илетĕп.

Çирĕм-çирĕм – пыл йӳçелчĕ.
Йӳçĕ, йӳçĕ, питĕ йӳçĕ!
Савăк кăмăл кĕвеленчĕ,
Пылăн хакĕ йӳнеçелчĕ.

Пыл пек пулчĕ-ши савниçĕм?
Юратсах унпа çӳрерĕм.
Вăхăт иртрĕ – чун кĕлленчĕ,
Вĕри туйăм вĕл-вĕл сӳнчĕ...

## САНПА ЧУХНЕ

Сисмен те эп:
Чĕрем юрри
Сан чĕрӳпех-мĕн
Кайнă.

Пĕлмен те эп:
Кун-çул тĕрри
Сан аллунтах-мĕн
Юлнă.

Туйман та эп:
Хĕвел çути
Сан сăнупа-мĕн
Çуннă.

Ăнлантăм эп:
Малаш утти
Санпа чухне-мĕн
Пулнă.

**В. КОНСТАНТИНОВ.**

Сăмах – следователе

# Асаннене «пулăшнă»

Пĕрре ята вараласан ырă çул çине тухма йывăррине кăçалччен виçĕ хут судпа айăпланнă Николай Егорович Шигалев та лайăх ăнланать ĕнтĕ. Анчах кая юлчĕ пулас...

2009 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Токшик ялĕнче пурăнакан Н. Шигалев патне ирлесех пĕр ялти çулсенчи хĕрарăм эрех ĕçме пырать. Аншарли «хĕртнĕ» вăхăтра вăл Туçи Олкашри В. Смирнов хăйĕнчен илнĕ 3 пин тенкĕ парăма тавăрма васкаманни пирки пĕлтерет. «Симĕс çĕлен» вăй панипе Н. Шигалев парăм ыйтăвĕ çине хурав илме хĕрарăмпа пĕрле кăнтăр тĕлĕнче В. Смирнов патне каяççĕ.

Туçи Олкаша çакскерсем чиперех çитеççĕ, анчах пĕчĕк кăлтăк ума тухать: кил хуçи вĕсене пӳрте кĕртмест. Капла ума лартнă тĕллеве татса пама çук. Асаннене пулăшас тĕллевпе пуçланă ĕçе вĕçне çитерес тесе «паттăрлăхне чарайман» Н. Шигалев В. Смирновăн пурăнмалли çуртне саккуна пăсса чӳрече рамине кăларса кĕрет. Кравать çинче выртакан кил хуçипе «сăпайлăн» калаçса илсе унăн асанне умĕнче парăм пуррине тата ăна тавăрма вăхăт çитнине аса илтерет. Пулса тухнă лару-тăрура кил хуçи урама тухса тарать, кӳршисем патне каçса хăйĕн килне Н. Шигалев йĕркене пăсса кĕни пирки тата хăратни çинчен милицие телефонпа шăнкăравласа пĕлтерет. Çапла вара «пулăшуçă» арçын тепĕр уголовнăй ĕç «ĕçлесе илчĕ».

**Л. ДАВЛЕТШИН,**
**районсем хушшинчи следстви пайĕн следователĕ.**